ТĔЛПУЛУ

# «Мерчен» – чăн тĕн çути

***Наци библиотекинчи «Мерчен» хăна тĕпелĕнче культурăпа тĕн мероприятийĕсем, православи лекторийĕсем ирттересси йăлана кĕнĕ. Вĕсене Чăваш митрополийĕн, вĕрентӳпе социаллă учрежденисен представителĕсем хутшăнаççĕ.***

Унта çак кунсенче «Çут ĕç çути» ятпа иртнĕ тĕлпулăва Чăваш наци телерадиокомпанийĕн журналисчĕсемпе митрополи ĕçченĕсем – Гурий /Данилов/ архимандрит, Сĕнтĕрвăрри епископне тин кăна суйланнă Игнатий /Суранов/ архимандрит, Михаил Иванов протоиерей /Шупашкар/, Николай Мазиков протоиерей /Шупашкар/, Петр Федоров протоиерей /Шупашкар/, Максим Зарубин протоиерей /Хĕрлĕ Чутай/, Илия Лебедев иерей /Шупашкар районĕнчи Шемшер/, Серафим /Лялькин/ игумен /Патăрьел районĕнчи Тăрăн/ тата ыттисем пынă. Унта çавăн пекех пултарулăх интеллигенцийĕ, общество, православи юхăмĕсен хастарĕсем, «Тăван Атăл» журнал редакторĕ Лидия Филиппова, «Ырă хыпар» журналăн тĕп редакторĕ Вера Савельева, православи литературине чăвашла куçаракан Виталий Енĕш писатель, ыттисем хутшăннă.

Тĕлпулура Чăваш наци телерадиокомпанийĕн аслă редакторĕ Роза Деменцова ертсе пыракан «Пачăшкă сăмахĕ», «Чĕрĕлĕх çути», «Азы просвещения», «Символ веры» радиопрограммăсен пĕлтерĕшĕ çинчен ЧР Культура министерствин этноконфесси хутшăнăвĕсен пай пуçлăхĕ Кирилл Павлов çапла каланă:

– Шăпах вĕсем культурăпа кăмăл-сипет пахалăхĕсене упраса хăварма, православин ĕмĕртен ĕмĕре куçса пыракан еткерлĕхĕпе çывăхланма, паянхи çамрăка патриот воспитанийĕ пама пулăшаççĕ.

Мероприятире тĕн çыннисем кăна мар, тĕрлĕ районтан килнĕ радиоитлекенсем те сăмах илнĕ. Вĕсем асăннă программăсен пĕлтерĕшне палăртнипе пĕрлех вырăнти çивĕч ыйтусене те хускатнă. Музыка тĕпелĕн тĕлпулăвне тĕн кĕвĕ-çемми илемлетнĕ. Шупашкарти Христос Чĕрĕлсе тăнипе хисепленекен храмăн настоятелĕ Михаил Иванов протоиерей Наци вулавăшне «Балавариани: мудрость Балавара» кĕнекесен пуххине парнеленĕ.

**Вера АРХИПОВА.**